# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
# САККУНĔ

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
## "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ĔÇ ВЕТЕРАНĔСЕМ ÇИНЧЕН"
## САККУНĔН 5 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2024 çулхи ака уйăхĕн 23-мĕшĕнче*
*йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин ĕç ветеранĕсем çинчен" 2015 çулхи раштав уйăхĕн 31-мĕшĕнчи 90 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2015, 12 №; 2016, 12 №; "Республика" хаçат, 2018, авăн уйăхĕн 19-мĕшĕ; 2020, пуш уйăхĕн 4-мĕшĕ) 5 статйин 3-мĕш пайне улшăну кĕртес, унтан "ыйтса çырнине тĕпе хурса" сăмахсене кăларса пăрахас.

**2 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи ака уйăхĕн 24-мĕшĕ
18 №

Управление делопроизводства Администрации Главы Чувашской Республики